24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 НОЯБРЬ 22 ШĂМАТКУН 276 (5991) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАСОР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Тăван çĕршыва хŭтĕлес ĕçре комсомолăн малти ретре пымалла

Гитлерла вăрă-хурахсем Украинăн пысăк пайне, Белоруссине, Молдавине, Литвана, Латвине, Эстонине тата чылай облаçсене тытса илчĕç. Усал тăшман Донбаса пырса кĕчĕ, Ленинград патне çитрĕ, мухтавлă столицăна — Москава хăратса тăрать. Тăван çĕршыв умĕнчи хăрушлăх ŭсрĕ. Çав хăрушлăха пĕтерме, тăшмана çĕмĕрсе тăкма тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетни кирлĕ. Фронта валли танксем, танксене хирĕç пемелли пăшалсĕмпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассемпе ытларах туса кăлармалла, тесе вĕрентет Сталин юлташ.

Юратнă çулпуç чĕнсе кăлани çине ответлесе, пирĕн республикăри комсомолецсем пысăк пуçару турĕç. Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксем пуçарнипе халĕ республикăра «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума укçа. тенкĕ пухас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăра Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне сŭтсе-явнă. Çавăнтах комсомолецсем бронепоезд тума 310 тенкĕ укçа пухнă. Тепĕр кунне укçа пухас ĕç фабрикăра ĕçлекенсем хушшинче сарăлса кайнă. Уйрăм работницăсем: Улейчик 50 тенкĕ, Кузнецова 30 тенкĕ, комсомолка Зимина 25 тенкĕ, Отолярова 25 тенкĕ, фабрика директорĕ Бучельникова юлташ 50 тенкĕ панă. Мĕнпурĕ фабрикипе 1200 тенкĕ укçа пухăннă. Укçа пухас ĕç сарăлсах пырать.

• • •

Шупашкарти Водосвет çумĕнчи комсомолăн пуçламĕш организацинчи комсомолецсем бронепоезд тума 329 тенкĕ укçа пухнă. Унсăр пуçне, пухура рабочисен пĕтĕм коллективĕпе пĕр-пĕр кун тепĕр сехет хушса ĕçлеме йышăннă. Çав сехетре ĕçленĕшĕн тивекен укçана бронепоезд тунă çĕре пама килĕшнĕ. Çакăнпа пĕрлех комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен заем облигацийĕсене хывма пулнă.

Т. КАРАСЕВА.

Комсомол пуçарнипе пирĕн республикăри комсомолецсем пысăк пуçару турĕç. Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне сŭтсе-явнă. Çавăнтах комсомолецсем бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухаççĕ. Хăшпĕр организацисен руководителĕсем пуçланă ĕçе вĕçне çитермесĕрех пăрахаççĕ. ВЛКСМ Вăрмар райкомĕ пуçарнипе Арапуç больницинче медсестрасен курсĕ уçăлнă. Пĕр эрне вĕренсе хыççăн курс саланса кайнă. Районри сыхăну отделенийĕ çумĕнче связистсен кружокне уçма тытăннă. Руководительне тупса çирĕплетнĕ, членсен списокне туса хунă, çавăнпа вара ĕçĕ пĕтнĕ. Машина рульне тытса çŭреме, шофер пулма вĕренес текен çамрăксем районра нумай, анчах ВЛКСМ райкомĕ халичченех руководитель тупса памасть. Паллах, çине тăрсан, руководитель тупăнать. Кашни комсомолецăн çар специальноçĕ пулмалла тенине манмалла мар. Çар ĕçне вĕренессине тапах та вăйлатмалла. Халĕ ĕнтĕ йĕлтĕрпе çŭреме вĕренес тĕлĕшпе ĕçлемелле, походсем туса иртпелле.

Совет çамрăкĕсем тăван çĕршыва чĕререн юратаççĕ. Вĕсем çĕршыв оборонин фондне вăйлатас тĕлĕшпе тĕрлĕ майсем тупаççĕ. Уйрăмăнах çамрăксем тăван çĕршыва хăйсен шархатарлă ĕçĕпе пулăшма тăрăшаççĕ. Комсомол пуçарнипе ик̆ĕ хутчен комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕсем пулса иртрĕç. Çамрăксемпе пĕрле ваттисем те воскресниксене хушшинче ĕçленĕ. Аз густăн 17-мĕшĕнче пулса иртнĕ воскреснике пирĕн республикăра пĕтĕмпе 130 пин çынна яхăн хутшăннă. Пĕр кун хушшинче оборона фондне 100 пине яхăн ĕçкунĕ, 70 пин тенкĕ укçа панă. Сентябрĕн 7-мĕшĕнче пулнă воскреснике 115 пине яхăн çын хутшăнса 77.885 тенкĕ укçа тата 75.079 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, çĕршыв оборонин фондне татах та ытларах вăйлатас шутпа, ыран, ноябрĕн 23-мĕшĕнче, комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри виççĕмĕш воскресникне туса ирттерме палăртрĕ. Иртнĕ воскресниксенчи паха опытсемпе çирменлĕхсене шута илсе, виççĕмĕш воскреснике татах та организованнăран ирттермелле. Воскреснике комсомолецсемпе союзра тăван çамрăксене кăна мар, мĕнпур ĕççыннисене хутшăнтарасшăн кĕрешмелле. Воскресникре хутшăнса ĕçлекен çамрăксем, тăвансем çĕршыва укçа-тенкĕ парса шулăпнисĕр пуçне, хăйсем тăван çĕршыва юратнине тата унăн чылăхĕшĕн паттăрăн кĕрешме пултарнине тепĕр хŭт кăтартса параççĕ. Воскресник организаторĕсен кирлĕ ĕç хатĕрĕсене туписа хатĕрлесе хурас пулать, ĕç вăйĕпе туллин усă курма тăрăшмалла.

Пурте ĕçе тухса, комсомолăн Пĕтĕм Союзри виççĕмĕш воскресникне организованно ирттерер!

„Комсомол Чувашии“ бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухаççĕ

• • •

Çак кунсенче Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри комсомолецсен пухăвĕ пулса иртнĕ. Унта вĕсем Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне сŭтсе-явнă. Çавăнтах комсомолецсем бронепоезд тума 310 тенкĕ укçа пухнă. Тепĕр кунне укçа пухас ĕç фабрикăра ĕçлекенсем хушшинче сарăлса кайнă. Уйрăм работницăсем: Улейчик 50 тенкĕ, Кузнецова 30 тенкĕ, комсомолка Зимина 25 тенкĕ, Отолярова 25 тенкĕ, фабрика директорĕ Бучельникова юлташ 50 тенкĕ панă. Мĕнпурĕ фабрикипе 1200 тенкĕ укçа пухăннă. Укçа пухас ĕç сарăлсах пырать.

• • •

Шупашкарти НКВД çумĕнчи пуçламĕш организацинчи комсомолецсем бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Дмитриев юлташ 150 тенкĕ, Слашманов юлташ 200 тенкĕ, Самойлова юлташ 110 тенкĕ, Савельев юлташ отпускпа усă курманшăн илме тивĕçлĕ укçана пĕтĕмпех панă.

• • •

ИШЛЕЙ, ноябрĕн 21-мĕш. **(Телефонпа).** Районра комсомолăн пуçламĕш организацийĕсенче Октябрьски районри «Большевик» промартельри косомолецсемпе çамрăксем чĕнсе каланине сŭтсе-явасси анлăн сарăлса пырать.

Ишлейри вăтам шкулта вĕренекенсем «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксем чĕнсе каланине ответлесе, «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 1370 тенкĕ укçа пухса панă. Райфора ĕçлекенсем те бронепоезд тума 619 тенкĕ укçа пухнă. И. Семенов юлташ 90 тенкĕ, Н. Одеряков комсомолец 60 тенкĕ укçа панă.

З. МИТРОФАНОВА.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 20-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерŭ

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче пирĕн войскăсем шур фронтсенче те противника хирĕç çапăçнă. Фронтăн Ростов (Дон çинчи Ростов), Волоколамск тата Тула участокĕсенче уйрăмах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ.

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче немĕçсенне малтан кăтартнă пек 21 самолет мар, 26 самолет пĕтерсе тăкнă.

Баренцово тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăнне пĕтĕмпе 1900 тонна водоизмещенилле 3 транспорт тата 5000 тонна водоизмещенилле пĕр танкер путарнă. Хура тинĕсре пирĕн карапсем противникăн 9000 тонна водоизмещенилле танкерне путарнă.

• • •

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче Хĕвеланăç тата Кăнтăр фрончĕсенче кĕрешекен пирĕн авиаци часĕсем немĕçсенне 30 танк, пехота ларса пыракан тата боеприпассем тиенĕ 100 ытла автомашинăна, çар хатĕрĕсем тиенĕ 140 лава пĕтерсе тăкнă тата хавалерин 2 эскадронне, пехотăн пĕр батальонне вĕлерсе пĕтернĕ.

• • •

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче тата ноябрĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чассем противника хирĕç хаяррăн çапăçса немĕçсенне 45 танк, 20 оруди ытла, 40 пулемет, темиçе миномет тата ытти хĕрнăлсем нумай пĕтерсе тăкнă, немĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

• • •

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Таванцев юлташăн часне хирĕç немĕçсем çак кунсенче 100 танк ытла кĕртсе янă. Таванцев юлташăн боецĕсем противник хĕснине çурĕппĕн хирĕç тăрса кĕтсе илнĕ, противника пысăк сухатусем кŭнĕ. Çапăçу хирĕнче немĕçсен çĕмĕрăлнĕ 17 танкĕ тата тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртса юлнă.

• • •

Амитов лейтенантăн танковăй экипажĕ противник колоннин тылне кĕрсе кайнă та немĕçсен виçĕ танкне, танксене хирĕç пемелли икĕ орудине, пехота ларса пыракан 8 автомашинине, 8 мотоциклистне тата тăшманăн салтакĕсене 50 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

Курăпко лейтенантăн танк экипажĕ, противник тылĕнче виçĕ кун хушши çапăçса, немĕçсен пĕр йывăр танкне, 4 вăтам танкне, 6 танкеткине тата тăшманăн пехоти ларса пыракан 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

• • •

Немĕçсен вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем çумĕнче, тупнă çырусем тата тыткăна илнисем кăтартса панисем фашистсен çарĕнче вăрçас шухăш-кăмăл пĕрмаях чакса пыни çинчен калаçсă. Немĕçсен артиллерийĕн 75-мĕш полкĕнче пулнă, нумаях пулмасть тыткăна лекнĕ Адольф Гельц офицер çумĕнче ун патне Германи çарĕн тылри службинче тăракан тусĕ Роберт текен офицер янă çырăва тупнă. Немĕçсен артиллери шкулĕ çумĕнче йĕркеленĕ пĕр резерври часне сăнласа кăтартса, Роберт çапла пĕлтерет: «Салтаксен нимĕнле атă та, нимĕнле каска та, нимĕнле карабин та çук. Хальхи вăхăтри çар хĕрăпăалĕ çинчен нимĕнле сăмах та пулма пултараймасть... Эпир çынсене вĕçĕмрен Гауптвахтăна ăсатса тăратпăр, штрафлатпăр тата ытти çирĕп мерăсем йышăнатпăр,—ĕç те пирĕн çавă кăна. Пĕтĕм вĕренŭ штабĕ следователь камери пек пулса тăчĕ, çакна курас килменнипе эпĕ хаваласпах вĕрен илсе çывăхри йывăçран кайса çăкăнаттăм». Тыткăна илнĕ лейтенант Курт Кульман çапла каласа парать: «Ноябрь çитрĕ, анчах та вăрçă пĕтесси халь те курăнмасть-ха. Çанталăк сивĕммеллех сивĕтрĕ. Немĕçсен командованийĕ çар валли ăшă тумтирсем тăратас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман. Çакă вăл салтаксене питĕ тарăхтарать, савăнпа та вĕсен шухăш-кăмăлĕ питĕ хуçалчĕ». Немĕç пехотин 17-мĕш дивизийĕн 95-мĕш полкĕнчи салтак Фридрих Химмер çапла калать: «Вăрçă пурне те йăлăхтарчĕ, пурте вăрçа хирĕç. Эпĕ нумай салтаксен шухăшне пĕлетĕп, вĕсем пурте тăван çĕршыва тавăрăнасшăн».

• • •

Украинăн немĕçсем вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенчен фашистла захватчиксем халăха ирĕксĕрлесе пусмăрлани çинчен, тискер ĕçсем туни çинчен пĕлтернисем килсех тăраççĕ. Никольаев облаçĕнчи Нестерево ялĕнче немĕçсем хресченсен пĕтĕм тыррине, вылăх-чĕрлĕхĕсене, кайăк-кĕшĕкне пуçтарса илнĕ. Хăйсен ачисене валли кăштах тырă хăварма тăнă 11 хресчене фашистсем персе вĕлернĕ. Свиридово ялĕнче Гитлерăн бандичĕсем хресченсен выльăх-чĕрлĕхĕсемпе тырпулне кăна мар, пĕтĕм тумтирĕсене, урана тăхăнмаллисене тата килти япаласене туртса илнĕ. Белово, Степановка тата Вакулино ялĕсенче пурăнакан арçынсемпе хĕрарăмсене тата çитĕнсе çитмен çамрăксене фашистсен отрячĕ паллă мар çĕрелле хăваласа кайнă. Пĕчĕк ачасене никамсăр тăратса хăварнă. Степановка ялĕнчи хресчен хĕрарăмĕ Глушенко хăйĕн виçĕ çулхи хĕрачине хăйпе пĕрле илме хăтланнă. Фашистсен урса кайнă офицерĕ вĕсене иккĕшне те персе вĕлернĕ. Антоново ялĕнче гитлеровецсем пур стариксене те арестленĕ те вĕсенчен ялти активистсене хăтартса пама ыйтнă, арестленисене тискеррĕн асаплантарнă, анчах та темĕнле асаплантарнине те вĕсем пĕр парламасăр çирĕппĕн чăтса ирттернĕ. Хăйсен юлташĕсене тытса паман. Палачсем ялти площадьре 5 вата хресченне персе вĕлернĕ

Ноябрĕн 21-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерŭ

Ноябрĕн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем мĕнпур фронтсенче противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

• • •

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен пирĕн авиаци часĕсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче немĕçсенне 215 автомашина, 32 танк, нумай пулеметсем, орудисем, продовольстви тиенĕ лавсем тата горючи тултарнă темиçе цистернăна пĕтерсе тăкнă, фашистсен салтакĕсене 1300 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

• • •

Кăнтăр Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Крейзер тата Давидов юлташсен часĕсем тăшман пехотин 200 танк пулăпнипе тунă хаяр атакине сирсе пăрахнă. Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче немĕçсен 55 танк пĕтнĕ. Çапăçу хирĕнче противник салтакĕсен пиншер виллисем выртса юлнă.

• • •

Крымра кĕрешекен К. юлташăн отрядĕнчи партизансем фашистсене хăюллăн çапа-çапа çĕмĕреççĕ. Çак кунсенче партизансен разведки С. хули патне фашистсем шултра калибрлă орудисем илсе пыни çинчен пĕлтернĕ. Отрядри боецсем тăшман артиллеристĕсене тытса чарма шут тытнă. Çĕр каçиччен партизансем, вырăнти халăх тулăшнипе, вунă лакăм ытла алтса унă тата тăшман хилес çул тăрăх темиçе километр тăршшĕнчи уйрăм вырăнсенче минăсем хурса тухнă. Ирĕнĕпе çул çинче немĕçсем хурăнса кайнă. Немĕç офицерĕсем ларса пыракан малти машини çине партизансем автоматсенчен пеме пуçланă та 4 фашиста вĕлернĕ. Партизансен атакине сирсе ярас тесе, немĕçсем 4 салтаксен пĕр ушкăнне уйăрнă та хăйсем малалла кайма тытăннă. Часах партизансем алтса унă лакăма пĕрремĕш оруди кĕрсе ŭкнĕ. Иккĕмĕш оруди, хăйĕн прислугипе пĕрлех, мина çине пырса тăрăннă та взрыв пулса сирпĕннĕ. Немĕç артиллеристĕсене хирĕç партизансем нумай сехет хушши çапăçнă, немĕç пехотин батальонĕ пырса çитсен кăна совет патриочĕсем тарса пытаннă. К. юлташăн партизанла отрячĕ хăюллăн çапăçнине пула немĕçсен пĕр çун хушшинче икĕ йывăр оруди, 8 грузовой машина, 42 салтак тата 5 офицер вилнĕ тата аманнă.

• • •

Юлашки кунсем хушшинче Польшăн чылай районĕсенче Германи влаçĕсене хирĕç хресченсен пысăк выступленийĕсем пулса иртнĕ. Пилав тата Ласкажев районĕсенче немĕçсем мĕнпур поляк хресченĕсене оборона ĕçне мобилизацилесси çинчен пĕлтернĕ. Оккупациллĕ влаçсем хушшинне тăвассинчен хресченсем массăллăн пăрăннă пирки немĕçсем поляксен 4 ялне çавăрса илнĕ те вĕсене тĕпшипех çунтарса янă. Вутра 60 çынна яхăн пĕтнĕ, çав шутра хĕрарăмсемпе ачасем нумай. Хресченсем пушара сŭнтерме хăтланнă. Вара немĕç салтакĕсем вĕсем çине автоматсенчен пеме пуçланă. 100 çынна ытла вĕлернĕ тата амантнă.

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнине уявланă кунсенче тухса каланă сăмахсем çине ответлесе, çĕршыври мĕнпур предприятисенче сталинла вахтăсем организацилеççĕ. Молотов ячĕпе тăракан чугунçул çинчи Шилка деповĕнчи хатĕрлев цехĕ сталинла вахтăн малтанхи кунĕнче задание 216 процент тултарнă. Слесарь Кисляк юлташ икĕ норма çурă ытла тултарнă. Евстафьев юлташ, икĕ станокпа ĕçлесе, 9 норма тултарнă, токарь Новоселов юлташ 4 норма тултарнă, Красноярскри паровозсем ремонтлакан заводри сборочнăй цехра ĕçлекен слесарь Болтин юлташ, котельщик професине вĕренсе алла илсе, сменăри нормăна икĕ хут ирттерсе тултарать. Саратоври комбайнсем тăвакан заводра 600 çамрăк рабочи сменăра икшер е унтан та ытларах нормăсем тăваççĕ. Менчин юлташ сменăри нормăна виçĕ хут ирттерсе, Кулезнев юлташ 4 хут ирттерсе тултарать. Чита облаçĕнчи «Болейзолото» комбинатра ĕçлекен рабочисем сталинла вахта кунĕсене ĕçри пысăк çитĕнŭсемпе паллă тăваççĕ. Виçĕ откатчик—Баранов, Подойницин тата Сапожников юлташсем сталинла вахтăн малтанхи кунĕнче 375 вагончик турăсарнă, халичченех 5 откатчик смотăра 250 вагон кăна турттарнă пулнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Немĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешŭ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, **Ленин орденĕ** тата **«Золотая Звезда»** медалĕ парса, çаксене **Совет Союз Геройĕн** званине парас:

1. Лейтенанта Борис Васильевич **Бирюкова**
2. Старший политрука Борис Михайлович **Васильева**
3. Сержанта Яков Иосифович **Ватонова**
4. Красноармееца Виктор Владимирович **Карандакова**
5. Лейтенанта Григорий Андреевич **Коцебана**
6. Красноармееца Михаил Павлович **Криворотова**
7. Старший политрука Алексей Петрович **Кириченкона**
8. Лейтенанта Петр Сергеевич **Кубаре.**
9. Танкиста кĕçĕн механика Иван Степанович **Кудрина**
10. Капитана Андрей Федорович **Локтионова**
11. Красноармееца Николай Феоктистович **Обухова**
12. Кĕçĕн лейтенанта Александр Иванович **Перепелицана**
13. Сержанта Арсентлй Иванович **Степанова**
14. Старший сержанта Петр Абрамович **Тикеляйнена.**
15. Капитана Фарит Мухаметзянович **Фаткулина**
16. Ефрейтора Алексей Александрович **Цыбулева**
17. Кĕçĕн лейтенанта Евгений Михайлович **Чистякова**
18. Старший сержанта Тимофей Максимович **Шашлона.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти ноябрĕн 20-мĕш.

ĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составне СССР Союзĕ орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлани

Немĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешŭ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕ Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составне СССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлана.

Ленин орденĕпе 16 çынна,
Хĕрлĕ Ялав орденĕпе 162 çынна,
Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе 159 çынна,
«За отвагу медальпе 129 çынна,
«За боевые заслуги» медальпе 42 çынна наградăланă. (ТАСС).

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇА ФРОНЧĔСЕНЧЕН КИЛНĔ ЮЛАШКИ ХЫПАРСЕМ

Мускав патĕнчи хаяр çапăçусем

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 19-мĕш. **(«Правда» спец. воен. корр.).** Ĕнер Хĕвеланăç фронтĕнче противник чылай участокĕнче хăйĕн активлăхне вăйлатни палăрнă. Сăмахран, Волоколамск енче фашистсем тăватă пехотнăй дивизине, «СС» дивизине тата танксен виçĕ дивизине пухса пырса çапăçăва кĕртнĕ. Ноябрĕн 18-мĕшĕнче çав районра вăйлă çапăçусем пуçланнă.

Пирĕн боецсемпе командирсем çине тăрса хăюллăн çапăçнă, советăн кашни пусăм çĕрне юлашки сывлăш тухиччен кĕрешсе хŭтĕленĕ, тăшмана питех те пысăк çухату тŭстернĕ. Каçалапа йыш тĕлĕнчен тата техника енчен вăйлăрах тăшман хĕснине пула пирĕн хăшпĕр чассен халăх пурăнакан чылай пунктсене хăварса урăх вырăна куçмалла пулнă.

Фронтăн кăнтăр енче Германи пехотине 100 танк ытла пулăшса пынă. Совет войскисем контратакăсем туса противник малалла каяссине часа тăнă, анчах вăл пĕр кун хушшинче чылай малалла кайма пултарнă.

Фронтăн хĕвелтухăç енче С. районĕнче ĕнер противник вăйлăн хирĕç тăнă, анчах вăл пирĕн чассене контратакăсем тума часа тăма пултарайман. Пирĕн полксенчен пĕри çапăçнă участокра немĕçсен 700 çын ытла вилне юлнă, вăл нумай трофейăсем тытса илнĕ.

Можайск тата Мало-Ярославец енĕсенче улшăнусем пулман, противник кунта хăйĕн активлăхне кăтартман.

Паян иртен пуçласах Можайск енче пирĕн оборонăна пĕлес шутпа противник тимлесех разведка тунă тата противникăн пĕчĕк групписем атакăсем тунă. Вăл атакăсене пурне те сирсе янă.

П. ЛИДОВ.

(«Правда», ноябрĕн 20-мĕш).

Тула патĕнче

ТУЛА, ноябрĕн 19-мĕш **(«Правда» спец. корр.).** Ноябрĕн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Тула енче лăпкă пулнă. Ирхине вара чылай пунктсенче противник хăйĕн часĕсене наступление кĕртсе янă. Уйрăмăнах паян Д. тата К. пунктсемшĕн вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Çапăçу темиçе сехет хушши пынă. Çапăçусем пулса пынă вырăнти пунктсем темиçе хутчен пĕр аллăран тепĕр алла куçнă.

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче ирхине сулахай участокра пуçланнă çапăçура фашистсен танксен пысăк мар группи пирĕн хăшпĕр подразделенисен тылне кĕрсе кайма пултарнă. Паян çав танксене хăйсен пехотинчен уйăрса илнĕ, вĕсене артиллерипе истребительсем хăвартăн пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Сиязов командирăн боецĕсем фин салтакне тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ салтак кăтартса панă тăрăх, вăл тăракан батальона Тула патне çак кунсенче куçарнă

Л. МИТНИЦКИЙ.

М. СИВОЛОБОВ.

(«Правда», ноябрĕн 20-мĕш).

Тăшмана малалла ямаççĕ

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, ноябрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Андреевпа Бондарев юлташсен подразделенийĕсем ноябрĕн 18—19-мĕшенче немĕç çарĕсене хирĕç Г. районĕнче активлăн çапăçнă. Пирĕн артиллеристсем пулеметсен вут-çулăмĕ тăшман вăйне чылаях пысăк сиен кунĕ, тăшманăн вилсе тата аманса салтакĕсемпе офицерĕсем нумай пĕтнĕ. Андреев юлташ подразделенийĕн участокĕнче немĕçсенне пĕр кун хушшинче икĕ станковăй, пилĕк ручной пулемет, пĕр миномет тата икĕ автомашина тăшман, вилнисемпе аманнисене пĕрле шутласан, 100 салтака яхăн çухатса, каялла чакрĕ.

Н-ски часăн подразделенийĕсем, танксем пулăпса пынипе тăшмана хăюллăн атакăласа, Х. ялĕнчен хăваласа кăларчĕç. Çапăçу хирне немĕç салтакĕсемпе офицерĕсенчен çĕр çынна яхăн вилсе юлчĕ. Çакăнпа пĕрлех, немĕçсенне 2 ПВО оруди, 4 станковăй тата 8 ручной пулемет, 100 винтовка, 2 радиоустановка, гранатăсем тата ытти çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

Тăшманăн ăнăççăр тапăнăвĕсем

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, ноябрĕн 19-мĕш. (ТАСС). Юлашки кунсенче В. тата П. районĕсенче немĕçсем пирĕн позицисем çине темиçе хутчен те наступлени туса кĕрсе кайма пăхрĕç. Малтанхи наступленийĕ ăнăççăр пĕтрĕ. Фашистсен, çапăçу хирне 300 çын вилни тата çĕмĕрĕлнĕ 3 танк пăрахса хăварса, каялла чакма лекрĕ. Иккĕмĕш тапхăрта вĕсем наступление В. тата Н. пунктĕсенчен кăнтăр еннерехрен туса пăхрĕç. Кунта та немĕçсем малалла кĕме хăтланни ахалех пулчĕ. Пирĕн артиллерипе минометсем вăйлăн пенине пула пĕтерсе тăкнă. Бондарев юлташăн участокĕнче тăшманăнне 4 пулемет йăвине çĕмĕрнĕ, шултра калибрлă пĕр пулемет тата немĕçсен чĕрĕ вăйне нумай пĕтерсе тăкнă. Фронтăн пĕр участокĕнче пирĕн подразделенисем, контратакăна кайса, немĕçсене виçĕ ялтан кăссе кăларнă. Немĕçсем пирĕн Д. районĕнчи позицине атакăлама хăтланнă, анчах та пирĕн çирĕп оборона çине пырса тăрăнипе каялла чакнă, çапăçу хирĕнче салтаксемпе офицерсен 600 вилине яхăн выртса юлнă.

СТАЛИН ЮЛТАШ ЛАРТКĂ ЗАДАЧĂСЕНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ПУРНĂÇА КЁРТСЕ ПЫРАР!

Ик-виç çыншăн ёçлеççё

ВĂРМАР. Аслă çулпуç Сталин юлташ кашнинех харпăрхăй вырăнĕнче тӳрё кăмăлпа, ёç тухăçлăхне ӳстерсе ёçлеме, çирёп дисциплинăллă пулма чĕнчĕ.

«Хёрлё Çăлтăр» колхозри хăшпёр колхозниксем Сталин юлташăн чĕнĕвне ёçпе ответлеççё. З. Некрасов юлташ пёр вăхăтрах икё бригадăн бригадирё тата весовщик пулса ёçлет. Çав вăхăтрах вăл Хёрлё Çар боецёсем валли ăшă тумтир çĕлетме пухнă 38 тире туса панă. А. Степанов колхозник бригадир тата конюх пулса тăрать. А. Чубуков юлташ—колхозри счетовод, вăл учет ёçне начар мар йёркеленё, унсăр пуçне вăл финагент пулса ёçлет. Вăл укçа-тенкё пухмалли виççёмёш квартал планне срокчен тултарса, районра пёрремёш вырăна тухнă. Халё IV квартал планне 68 процент тултарнă. Заем укçине 102 процент пухнă.

Колхозри ватă çынсем фронта кайнисен вырăнче тăрăшса ёçлеççё. 60 çулти И. Трофимов колхоз кладовщикё пулса ёçлет. Ёçпе хăйён хастарлăхне кăтартать. Хёрлё Çар боецёсем валли ăшă тумтир пухас ёçе те активлăн хутшăнать. Вăл 400 грамм çăм, пёр тир, 150 тенкёлёх заем облигацийё панă.

Кавалти «Маяк» колхозра та ик-виç çыншăн ёçлекен хастарлă колхозниксем сахал мар. Пыл хурчёсене пăхакан Н. Егоров халё машинист пулса ёçлет. Хёрарăмсем ответлă вырăнсене ёçлеме тăрççё. А. Адюковăпа М. Рожкова колхозницăсем фронта кайнă упăшкисем вырăнче бригадирсем пулса ёçлеççё. Калас пулать, ёçре вёсем арçынсенчен пёрре те юлмаççё. Адюкова юлташăн бригади малта пыракан бригадăсенчен пёри шутланать.

М. Макарова халиччен доярка пулса ёçленё. Халё вăл ёнесене хăех пăхать, хăех сăвать. Ку тараннчен сысна фермине икё çын ёçленё пулсан, халё унта М. Иванова пёр пёрченех ёлкёрсе пырать.

Ватă çынсем те ответлă ёçе тăрааççё Хăйсен ёçне тёплён туса пыраççё. 70 çулти Тукмаков колхозникăн 3 ывăлё Хёрлё Çара кайнă. Колхоз правленийё ăна 6-мёш бригадăн бригадирё пулса ёçлеме уйăрнă. Тукмаков юлташ вăрçă вăхăтёнче пурин те ёçлемеллине лайăх пёлет, çавăнпа пёр турткаланмасăрах ёçе тытăннă.

75 çулти А. Кудрявцев звеновод пулса ёçленё. Ывăлё Хёрлё Çара кайнă хыççăн ăна кладовщике суйланă. Вăл Хёрлё Çар боецёсем валли ăшă тумтир тума 3 тир панă.

70 çултан иртнё М. Ильина кăçал 100 ёçкунё ытла тунă. Унăн ывăлё те Хёрлё Çарта гитлерла вăрă-хурахсене хирёç паттăрăн кёрешет.

6-мёш бригадири П. Веселовпа П. Баби звеноводсен звенисем кăтартуллăн ёçлеççё. Звеноводсем хăйсем 600—700-шер ёçкунё тунă.

Тăрăшса ёçлекенсене колхоз хапăл тăвать, вёсен ёçне пысăккăн хаклать. М. Макарова колхозница колхозри чăхчёпсене лайăх пăхса, вёсенчен çăмарта илмелли планлă заданине ытлашшипех тултарнă. Çавăнпа вăл 126 çăмарта илет.

Е. ВАСИЛЬЕВА.

Çĕнё çёклену

КУКЁÇ. Машинно-тракторнăй станцинчи трактористсемпе мастерскойра ёçлекенсем хушшинче Сталин юлташ докладне ăнлантарса панă хыççăн вёсем малашне тата лайăхрах ёçлеме, тракторсене январён 1-мёш тёлне пётёмпех юсаса пётерме сăмах пачёç.

Тракторсене юсас ёçре ёçлекен рабочисем хушшинче производствăллă çĕнё çёклену анлăн сарăлса пырать. Кашни рабочи Сталин юлташ сăмахне ёç тухăçлăхне ӳстернипе ответлет. Вёсем тракторсене юсанă çёрте вырăнти материалсемпе туллин усă курааççё. Тракторсен чылай пайёсене хăйсемех туса хатёрлеççё, киввисене юсаççё.

Чылай тракторсене вырăнтах юсама пунктсем организациленё. Вунпёрмёш бригада тракторсене Альгешре юсать.

Столяров, Кудряшов трактористсем хăйсен тракторёсене ёçленё хушăрах юсаса пынă. Çавна пула вёсен тракторёсене кăçал юсама кирлё мар.

Виççёмёш бригадăн тăватă трактор юсамалла пулнă. Халё виçё трактор юсаса кăларнă.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Пахалăхлă продукцишён

ÇЕМЁРЛЕ. Ноябрён 21-мёш. **(Телефонпа, хамăр корр.)** «Большевик» заводри пёр цехăн коллективё, Сталин юлташăн докладне сӳтсе-явнă май, ёçри хастарлăха татах та ытларах ӳстерме, лайăх пахалăхлă продукци туса кăларма обязательство илчё. Цехри рабочисем халё илнё обязательствăна пурнăçа кёртсе пыраççё. Вёсем çулпуç сăмахёсем çине тухăçлă ёçпе ответлеççё.

Цех коллективне çак уйăхра васкавлă заказ тума панă. План тăрăх çав заказа ноябрён 20-мёшне туса пётермелле пулнă, ăмăрту вăйлăн сарăлса тăнипе цех коллективё ăна икё хут маларах пурнăçа кёртрё. Ёç тухăçлăхне ӳстерес тёллёпе уйăрăм стахановецсем паха тёслёхсем кăтартаççё. А. Закалябин, А. Кузьмин юлташсем куллен-хи нормăна 2—3 хут, Ф. Индряхов 3—4 хут ӳстерсе тултараççё.

Краснов юлташ ертсе пыракан бригада та тухăçлăн ёçлет. Вăл иртнё уйăхра плана 200 процент тултарнă. Халё бригада тата паха результатсем кăтартса ёçлет. Юлашки вăхăтра бригада членёсем васкавлă заказа пурнăçланă çёрте 23 сехет хушши цехран тухмасăр ёçленё.

Иртен пуçласа тёттёмччен ёçлеççё

ÇЁРПУ. **(«Чăваш Коммуни»** корр.) Тутарла Кăнаш ялсоветне кёрекен «Сталинцы», «Красный Октябрь», «Красный флот» тата «КИМ» колхозсенче Сталин юлташ докладне пысăк активлăхпа сӳтсе-явнă. Сталин юлташ докладне колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантарса парас тёллёпе «Сталинцы» колхозри туллимар вăтам шкулти учительсем активлăн ёçлеççё.

Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн ялсовета кёрекен колхозсенче пётём ёç вăйланчё. Колхозсенче ёçлеме пултаракансем: ваттисемпе çамрăксем пурте авăн çапас ёçе активлăн хутшăнаççё. Ир пуçласа сём тёттём пуличченех ёçлеççё. Кунпа пёрлех колхозсем государство умёнчи обязательствăсене тултарса пыраççё. «Красный флот» колхоз ноябрён 19-мёшне 20-мёшёнче 100 центнер тёштырă лессе парса, натуроплата тыррине тӳлесе татрё.

Г. ПЕТРОВ.

ТАСС ОПРОВЕРЖЕНИЙЁ

Японири Домей Цусин агентстви пёлтернё тăрăх, ноябрён 16-мёшёнче совет салтакёсен группи Манчжурия станцинчен 40 километр çурçёр енне-рехре Манчжури чиккине пăснă иккен, çак вăхăтра хире-хирёç перçе тăнă чухне советăн пёр салтакне вёлернё тата иккёшне тытса илнё иккен.

ТАСС çапла пёлтерме полномочи илнё: Домей Цусин агентствин çав пёлтерёвё чăнлăхпа çыхăнса тăмасть. Манчжури чиккисене совет салтакёсен нимёнле группи те пăсман.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, ноябрён 20-мёш. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, Англин премьер-министрё Сывăхри Хёвелтухăçёнчи вăрçă ёçёсем пирки общинăсен палатинче сăмах тухса каланă. Вăл çапла пёлтернё: «Ливи фронтёнче Германипе Итали çарёсене хирёç наступлени пуçланни çинчен Каиртан панă коммюникене палата пысăк интереспа кётсе илнё тесе шанатăп эпё. Çав наступление тума кумайччен тата тёплён хатёрленнё. Кучухнехи вăрçăра хăйён тивёçлёхне катартнă пур тёрлё хёçпăлапа та пирён çар тулин те лайăх хёçпăлланатăр тесе эпир 5 уйăха яхăн кётсе тăтăмăр. Ливи пушхирёсенчи пек вăрçăн йывăр условийёсем урăх пётём тёнчипе те çук. Унта танксемпе, авиаципе тата механизацине питех те анлăн усă курсан кăна пысăк масштабсемпе хăварттăн малалла куçса пыма май пур.

Унти условисем тинёс çинчи вăрçă условийёсемпе пёр пекрех. Операцисене хутшăнакан тёп çар чаçёсем инçете тăсăлакан çулсем тăрăх хăварттăн куçса пыма хатёрленнё чухне тата çавăн пек куçса пынă чухне хăйсен аллинчи радиоустановкăсене ёçе яраççё. Тăшманпа пулса иртекен тытăçусем флотсемпе флотилисен кёрешёвне аса илтереççё. Тинёс çинчи çапăçурисем пекех, çапăçу мёнпе пётессине ик-виçё сехет хушшинчи вăхăт татса парать. Паллах,, çакăн пек чухне противникăн бронетанковăй чаçёсене пётерсе тăкма е питех те хăвалтă пырса çапма пулать, противникăн сывлăшри вăйёсене пусарма пулать, çыран хёрринчи районра пухăнса тăнă противник пехотине артиллерийён положенийё, паллах, хăшпёр тёлёпрен питех те йывăр килсе тухать.

Англипе Британи империйён войскисем пуçланă наступлении тёллёвё пёр-пёр пункта йышăнса илессинче кăна мар, противникăн хёçпăллă вăйёсене, пуринчен малтан, унăн мотомехчаçёсене пётерсе тăкассинче ытларах тăрать. Çав шутпа Хёвеланăç пушхирёнчи çар тинёсрен пуçласа Джерабуб оазисё патне çитиччен тăсăлакан анлă фронтра наступлени пуçласа яма хатёрленсе тăчё. Çак ёçсене пурне те ноябрён 17-мёш тёлне, каç пулнă тёле, хатёрлесе çитернё. Ноябрён 18-мёшёнче шурăмпуç килнё чух генеральнăй наступлени пуçланса кайрё. Инçе çула тухма хатёрленнё пирён войскăсене малалла кайма питех те вăйлă çумăрсем чăрмантарнă. Анчах çав çумăрсем тинёс хёрринчи вырăнсенче пушхиртинчен нумай вăйлăрах пулнă пулмалла, çав çумăрсем пирёншён мар, противникшăн малашне татах та сиенлёрех пулма пултарёç. Ноябрён 18-мёшёнче пирён войскăсем противникăн малта тăракан войскисемпе нумай пунктсенче хире-хирёç тёл пулнă. Çакна противник пачах та кётмен пулас. Пушхирти çар хальхи вăхăтра противник вăйёсемпе тавлашса пăхма чылай ăнăçлăнрах хатёрленсе çитнё. Бронетанковăй пысăк чаçсем хире-хирёç тёл пулса çапăçма пуçлани çинчен халлёхе эпё пёлместёп-ха. Анчах, паллах, противникăн çавна нумаях кётсе тăма лекмё. Çёнтерӳ пуласси пирки савăнма халлёхе иртерехха. Окинлек генерал, стратеги енёпе палăртнă тăрăх, противникăн вăйёсем патне çывхарса пыракан питех те ăнăçлăн пурнăçа кёртрё тата противникран лайăхрах позицисем йышăнса тăчё. Окинлек генерал Кэннингхем генералăн 8-мёш çарне те ертсе пырать. Халё ёнтё пётём ёç пулас çапăçуран килет. Паллах, сывăхри темиçе кутсенче эпир питех те интереслё событисем пулса иртнине курăпăр. Иккёленмелли çук: Англипе Британин мёнпур войскисем, çав операцисене хутшăннăçсерсем, противника хирёç çапăçăва пухас вăхăта нумай кётсе тăнипе хавхаланнă, вёсем ёнтё тăшмана хирёç çавтери пысăк хастарлăхпа та паттăрлăхпа çапăçёç. Вёсем çак тӳйăмпа çунаççё: эпир нимёçсемпе маштăлти хут пирён вăйсем тата хёçпăшал пёр шайлă пулса тăнă таппăрта тёл пулат пăр. Эпир лайăх пёлсе тăратпăр: Ливире Англия çёнтерӳ туни пётём вăрçă ёçне влияни парё».

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, ноябрён 19-мёш. (ТАСС). Авиаци министерствипе шалти ёçсен тата шалти хăрушсăрлăх министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: ноябрён 19-мёш ыран тенё чух çёрле Германи авиацийё Англи çийёнче пысăк активлăхах кăтартман. Противникăн темиçе самолечё Англин хёвелтухăç хёрринче тата çёршывăн кăнтăр-хёвелтухăç пайёнче вырнаçса тăракан тёрлё пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Тунă сиен пысăк мар, çухатусем те нумаях мар, вăл шутра вилнисем темиçе çын пур.

Англин тинёс министерстви пёлтерни

ЛОНДОН, ноябрён 20-мёш. (ТАСС). Англин тинёс министерстви кăларнă коммюникере çапла пёлтернё: Англин подводнăй лодки Вăтаçёр тинёсре противникăн грузсем турттарса çӳрекен суднисем çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Италин 4953 тонна водоизмещенилле «Сен Пико» танкерё çине торпеда янă тата ăна чылаях сиенленё. Çавăн хыççăн Италин танкерё чылай тарăн анса ларнине палăртнă. Германин пысăках мар пароходё нумай япаласем тиесе конвойпа кăнтăралла кайнă пулнă, ун çине торпеда янă, пароход путнă. Ăна конвойпа илсе пыракан карапсенчен пёрне сиенленё. Нефть турттарса пыракан шхунăна пулеметсенчен персе çунтарса янă.

Англичансен наступленийё

Лондонра официальнăй йёркепе çапла пёлтереççё: Англи çарёсем Киренаикăра пысăк наступлени пуçласа янă. Наступлени анлă фронтпа, Соллумран пуçласа Джерабуб оазисё патне çитиччен, пырать.

Ноябрён 18-мёшёнче Киренаика çинче пулнă сывлăшри çапăçусенче Англин патрульри самолечёсем противникăнне 18 машина персе антарнă. Англи авиацийён пёр самолет пётнё. (ТАСС).

Австрали войскисем Малайăна пырса çитнё

НЬЮ-ИОРК, ноябрён 20-мёш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Сингапурти корреспонденчё пёлтернё тăрăх, Малайăна Австралин подкрепленийё пырса çитнё. Пырса çитнё войскăсем хушшинче техникăллă чаçсем тата авиаци чаçёсен личнăй составё пур.

Германи фашисчёсем Нимёнле хёрхенёве те пёлмеççё

ЖЕНЁВА, ноябрён 19-мёш. (ТАСС). Мексикăн Берлинри миссийё, Мексика правительстви хушнă тăрăх, çак кунсенче Германи правительствине нота панăччё. Çав нотăна Германин Франци. ри оккупациллё влаçёсем француз заложникёсене асаплантарса вёлернине хирёçлесе çырнă пулнă. Çав нота нацистсене пётёмпех уртарса янă. Ноябрён 18-мёшёнче Германин информаци бюровё Мексика миссийён ноти пирки Германи правительстви таврашёнче ёçлекенсен комментарине пёлтернё. Ку комментари, нацистсен яланхи пек сăмахёсемпе сырнăскер, оккупацилемӳ Франци çёршёнчи Германи влаçёсен тискер ёçёсене пётёмпех тӳрре кăларма тăрăшать. Çапла нацистсем хăйсен тискер ёçёсем çинчен хăйсем те тунма шутламаççё, вёсем çав тискерлёхе тӳрре кăларма çеç пăхаççё. Пуринпён те палла ёнтё, варварла фашистсемпе этеме хёрхенесси çинчен калаçни—пётёмпех усăсăр япала.

Курусу Вашингтонра калаçни çинчен

НЬЮ-ИОРК, ноябрён 19-мёш. (ТАСС). Хэлл пичет представителёсемпе иртернё калаçура: Рузвельт Курусупа тата Номурапа тёл пулса калаçнă чухне пётёмёшлё ыйтусене сӳтсе явнă, тесе пёлтернё. Япония хăйён тулашри политикин мёнле те пулин ыйтăвёнче уступка тума шутламасть-и, тесе пичет представителёсем ыйтнине хирёç Хэлл: калаçусем çавăн патне кăна пырса çитнё, тесе ответленё. Калаçусене малалла тăсас тёлёшпе США çак тёлпулу хыççăн хăйён шухăшне улăштарма шутламасть-и, тесе ыйтнине хирёç те Хэлл ответ панă.

ВАШИНГТОН, ноябрён 19-мёш. (ТАСС). Курусупа тата Номурапа Хэлл 2 сехет те 45 минута хушши калаçнă. Пичет представителёсемпе калаçнă чухне, Хэлл, калаçусем малтанлăха кăна пулса пыраççё, тесе пёлтернё.

Курусупа Номура,Тодзиопа Того сăмахёсене шута илсе, калаçу вăхăтёнче компромисс тума хатёр тăнине палăртман-и, тесе ыйтнă. Пулса тăнă положение пётёмпех, çав шутра официальнăй йёркепе каланисене те тёпё-йёрёпех пăхса тухма шутлатăп, тесе пёлтернё Хэлл. Хăй каланисене урăх тёрлё ăнлантарса пама пултарассинчен сыхланас тесе, Хэлл хăй Япони представителёсемпе иртернё калаçу пирки тёплён сӳтсе явма килёшменни çинчен пёлтернё.

Номура пичет представителёсене калаçусем малалла пыраççё тесе ăнлантарнă пек çитнё, тесе ответленё. Калаçусене малалла тăсас тёлёшпе США çак тёлпулу хыççăн хăйён шухăшне улăштарма шутламасть-и, тесе ыйтнине хирёç те Хэлл ответ панă.

ВАШИНГТОН, ноябрён 19-мёш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчё пёлтернё тăрăх, сенатăн ютçёршыв ёçёсен комисси членё Пеппер çапла каланă: агрессие чарса лартас тесе, кирлё пулсан, Японие хирёç США вăрçма тытăнё, тенё. Япония мирлё пурăнасшăн тăрать пулсан, тенё вăл, унăн агресси тума чăрăнса, Китайран тухса каймалла. Курусу США-на Японин агрессивнăй политикипе килёшмелле тăвас тесе килнё пулсан, вăл килни вара усăсăрах пулё.

Изоляционист-сенаторсен лидерё Уилер пичет представителёсемпе калаçнă чухне хаçат-журналсенче Японипе Америка хушшинче вăрçă тухма пултарас хăрушлăх çинчен сӳтсе-явнине хыттăн сивленё, Японипе Америка хушшинчи хирёçӳсене мирлён татса пама май пуррине шанса тăни çинчен пёлтернё.

ЛОНДОН, ноябрён 20-мёш. (ТАСС). Курусун Вашингтонра иртекен калаçăвёсем пирки «Таймс» хаçатăн дипломатиллё корреспонденчё: «Курусу хăйпе пёрле вăл хăй Пёрлешӳллё Штатсене кăмăллантине çеç илсе килнё пулсан, вара унăн ёçё ăнăçсăр пулать», тесе çырать.

«Манчестер Гардиан» пёлтернё тăрăх, Сингапурта çапла шухăшлаççё: Японецсем тёнёл держависемпе союз тытма халех пăрахма тата Индо-Китайран тухса кайма шутламаççё пулсан, вара США-па килёшӳ тăвасса шанма пултараймаççё.

Япония нумай вăхăт хушши ёнтё Инçетри Хёвелтухăçёнче лăпкă пурнăç тума чăрмантарса пырать тата Японин агресси туса пырас политикине чарса лартма вăхăт çитрё, тесе çырать «Дейли мейл». Япония çавна кирлё майсемпе татса пама шухăшлать-и е шухăшламаст-и — унăн çавăн çинчен калама тиветех. Çак ыйтăва вёçне çитиех татса памашкăн Англипе Америка пётёмёшпех хатёр тăраççё.

Лондонри радио тăрăх обзор туса пыракан Сирил Лекин хăйён радио тăрăх панă черетлё передачинче çапла каланă:

Японипе Америка хушшинче пыракан калаçусен результачёсем мёнле пулассине эпир малтанах пёлсе тăма пултараймастпăр. Анчах та Япония Америка тёлёшпе çине тăрсах малтанхи политикăна тытса пырать пулсан, çав калаçусем ырă результатсем пама пултарасса шанма тивăр.

Англин Инçетри Хёвелтухăçёнчи политики çине куçса, Лекин çапла каланă: Лăпкă океанра вăрçма мён кирли пирён пур. Канадăпа Австрали те вăрçа пирёнпе пёрле хатёрленсе пыраççё, вёсем çав вăрçа пирён майлă пулса хутшăнёç. Сингапур хальхи вăхăтра тинёс çинчи питё вăйлă база çеç мар, вăл тата халё çёр çинчи база та пулса тăрать, унта халё техникăн юлашки вăхăтри çитёнёвёсем тăрăх хёçпăаллантарнă войскăсем кумай пухса тăратнă.

ТОКИО, ноябрён 19-мёш. (ТАСС). Премьер Тодзио тата ютçёршыв ёçёсен министрё Того Япони парламенчён сессийёнче каланă сăмахсем пирки çырса, Японири пичет Курусу Вашингтонра иртеррекен калаçусене уйăрмах пысăк выраня хурать. Тодзио тата Того хăйсен сăмахёсенче Вашингтонра пыракан калаçусене аса тытса тăнă тесе палăртса, «Асахи» хаçат çапла çырать: «Пёрлешӳллё Штатсем Японин тулашри политикин вирё принципне йышăнмасан, вара Японин ёç япăхланассине кётсе илме хатёр пулмалла». Виççёмёш державăсем темён тёрлё сӳнӳсем параççё тата хăйсем Японипе тусла пурăнма хатёрри çинчен калаççё пулсан та, вёсем Японин Китайри ёçё-сене хутшăнаççё пулсан, çавнашкал державăсене Японие хирёçле держăвăсем тесе йышăнас пулать тата вёсене хирёç мерăсем йышăнас пулать, тесе çырать «Ници-ници». «Пёрлешӳллё Штатсем Китая малалла та пулăшса пыраççё пулсан, Японипе Америка хушшинчи отношенисем пирки калаçса талăлас тёлёшпе нимёнле шанăç та çук», тесе çырать хаçат.

Японипе Китай хушшинчи отношенисем хальхи вăхăтра кризисра пулнине палла тăвать хаçат. Калаçусем ăнăçлă ăнăçсăр пуласси пётёмёшпех США правительстви мёнле позици тытнинчен килет. Япония хăй йышăннă позицирен пёр вершук та каялла чакас мар тесе çирёп шухăш тытнă.

«Миако» хаçат: «дипломатиллё мерăсемпе усă курассин вёçё пур», тесе çырать. Японипе Америка хушшинче пыракан калаçусене вёçне çитерме кирлё утăмсене Япони правительстви пурне те турё, «мён тума кирлине туса çитерпё ёнтё, çавăнпа та висерен иртсех тăрăшни кирлё мар». Хальхи вăхăтра лару-тăру юлашки сыпăка çитсе тăчё, тесе кăтартса парать хаçат.

ЧУНЦИН, ноябрён 19-мёш. (ТАСС). «Догунбао» хаçат хăйён умстатьинче Японипе Америка хушшинчи калаçусем çинчен чарăнса тăрать. Японин Берлинри посолё пулнă чухне Германипе туслă пурăнасси çинчен пакт çине ală пуснă тата США-на хирёç пёр хутчен кăна мар тухса каланă Курусу халё, агрессие хирёçле вăйсене пёрлештерес ёç пынă вăхăтра, Вашингтона калаçусем иртерме пыни пётём тёнчери обществăллă шухăша тарăхтарма пултарать, тесе паллă тăвать хаçат. Çав вăхăтрах хаçат: «США политики çирёп тата ăна никам та улăштарма пултараймасть. Эпир Рузвельта ёненсе тăратпăр», тесе çырать.

США-па Франци хушшинчи отношенисем

ЛОНДОН, ноябрён 20-мёш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчё Вашингтонран пёлтернё тăрăх, Америкăри Пёрлешӳллё Штатсен правительстви Виши правительствине, Франция Германипе çирёпрех отношени тытасси палăрнă май, хăйён Франци тёлёшпе туса пыракан позицине йăлтах тепёр хут пăхса тухасси çинчен пёлтернё. Уэллес Францин Вашингтонри посолё умне тăратнă заявлени,—тесе çырать корреспондент,—Францине уçăн асăрхаттарать. Лайăх пёлсе тăракансем каланă тăрăх, çав заявлени дипломатиллё отношенисене татасси патне илсе пырать. Америкăн Пёрлешӳллё Штатсен правительстви, хăйён Виширi посолёнчен Легирен доклад илнё хыççăн, татăклă мерăсем йышăнасса кётеççё. Ёнер Леги чылай вăхăт хушши Петэнпа калаçнă.

Китайăн нацилле-политикăллă совечён сессийё

ЧУНЦИН, ноябрён 19-мёш. (ТАСС). Чунцин хулинче Китайăн нацилле-политикăллă совечён сессийё уçăлнă. Сессие Гоминдан тата ытти политикăллă группăсен представителёсем пуçтарăннă, çавăн пекех тата Китайри коммунистсен партин представителё те пынă. Сессие уçнă чухне Чан-Кай-ши тухса пысăк доклад туса панă. Вăл пётём тёнчери лару-тăру ыйтăвёсем çинче тёплён чарăнса тăнă, Китай нацине çăлса хăварас тёлёшпе пыракан вăрçă перспективисем мёнле курăнса тăнине пит тёплён çутатса панă. Сесси ютçёршыв ёçёсен министрён Го-Тай-цин, çар министрён Хо-Ин-цин тата экономика министрён Вэн-Вэнь-хао доклачёсене итленё. Экономика лару-тăрăвё çинчен каланă чухне, Вэн-Вэнь-хао Китай промышленноçё, уйăрăмăнах государство предприятийёсем ӳссе пынине паллă туса хăварнă. Çавăн пекех тата сесси Китай çёршывён финанс министрё туна доклада итленё.

Германие хирёçле шухăш-кăмăл сарăлни

НЬЮ-ИОРК, ноябрён 20-мёш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат хăйён корреспонденчён Портерăн статьине пичетлесе кăларнă. Вăл 8 уйăх хушши Франципе пурăннă хыççăн нумаях пулмасть каялла тавăрăннă. Портер сăмахё тăрăх, Франци халăхёнчен 90 процентё Германие хирёçле шухăш-кăмăл тытать. Уйăрмах Бретаньре тата Нормандире Германие хирёçле шухăш-кăмăл вăйлăн сарăлнă, час-часах саботажсем тăваççё тата нимёç салтакёсем çине тапăнаççё. Вёлернё нимёçсен ӳтёсене час-часах канавсенче тата юханшывсенче тупаççё. Нор тата Падекале департаменчёсенче, çёркăмрăкё кăларакан районсенче, Германин çар контрольне пăхмасăрах, рабочисем шахтăсене час-часах путараççё, оборудованисене пăсаççё, чугунçулсем çинче крушенисем тăваççё. Эльзас-Лотарингин хёвелтухăç пайёнче халăх Германи тавăрёсене çунтарать, çёркăмрăкё тиенё баржăсене шыва путарать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЁ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителён — 3—97, редакци секретарён — 4—40, пропаганда пайён — 4—97, парти пурнăç пайён — 7—97, ялхуçалăхёпе промышленноçть пайёсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайён — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин сулёпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7145. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 557. Ф. б. 58, 84 п. л.

„КАМ ВĂЛ ГИТЛЕР ТАТА ВĂЛ МЁН ТĂВАСШĂН?“

Çакăн пек ят панă Алексей Толстой хăйён статьисенчен пёрине. Ана халё Чăваш АССР Государство издательстви чăвашла куçарса уйăрăм кёнеке туса кăларнă.

Елёк унăн тусё пулнисенчен пёри Гитлер çинчен акă мён каласа парать:

«Гитлер—австриец, таможняра ёçленё пёчёк чиновник ывăлё, унăн чăнчăн хушамачё—Шикльгрубер.

Вăл вăтам шкултан вёренкелесе тухнă. Вёренессе начар вёреннё, художник пулма ёмётленнё, анчах таланчё пулман пирки пёр вăхăтра строительство конторинче ёçленё. Профсоюза кёресшён мар пулнăшăн тата еврейсене хурăмасăр мăшкăлланă пирки ăна ёçрен кăларнă. Вара вăл чертежник пулса тăнă та, ахаль çынсенчен нимёнпе те палăрса тăман.

Империализмлă вăрçă вăхăтёнче Баварски полк штабёнче ёçленё, унта вăл офицер чинне илнё... Пёр тытăçура ăна газпа сиенленё пулнă, вара вăл чутах суккăрланса юлман. Çавăн хыççăн вăл тытса пăрахакан евёрлё, аташтаракан чирпе чирленё çын пекех пулса тăнă...

1919 çулта, Мюнхенри революцие çёмёрсе тăкнă хыççăн, вăл уйăрăм комиссинче следователь пулса ёçлеме тытăннă. Çакăнта вара вăл, айăплакан актсем çырса тата Германи революционерёсене перçе вёлерттерсе, çын юнне ёçме юратакан пулса тăнă».

Çак вăхăтра Мюнхенра «национал-социалистла» партин пирвайхи кружокё пуçланса кайнă. Кружокра вăл çичёмёш номерпа шутланса тăнă. Гитлер кунта кружокăн барабанщикё пекки çеç пулнă темелле.

Гитлерăн паллă енё вăл—хăйне мухтанине питех те юратни пулать. Гитлер—çавтери çилёллё, тытамаклă, ирсёр çын.

Гитлер хăй тавра майёпенех тёрлё авантюристене, уголовниксене, вăрăхурахсене, бандитсене пухса пынă. Çапла майсемпе жуликла хăтланса, унтан вара юнлă провокацисем урлă власа хăйён аллине çавăрса илсе,—вăл канцлер пулса тăнă, хăйне «фюрер» тесе аркатуллă тискер ёçсем тума пуçланă.

Çак усал асамçă халё те-ха бандитла ёçёсене туса пырать. Совет Союзне хирёç вăл ирсёррён те ултавлăн вăрçă пуçларё.

Çак асар-писер этем, юнёçсен, Совет халăхне чуралантарса, фашистла йёрке туса хурасшăн. Вăл «çёнё йёрке» çинчен кăшкăрать.

Унăн «çёнё йёрки» çакăн пек:

«Гитлерăн тёп планё тёнчере пуçпулса тăрасси, хăйне кирлё мар халăхсене пётерсе, ёмёрлёхех фашистла пёр йёрке туса хурасси пулать. Анчах унăн кунта шухăш çитеймен: çав çёнё йёркесене вăл авалхи вăтам ёмёртен ӳкерсе илнё: вăл—пирамида пулса тăрать, çав пирамидăн тёрринче çурма-турă—Гитлер, аяларах—унăн çывăх сановникёсем: Геббельсем, Герингсем, Риббентропсем тата ытти хура сволочьсем лараççё, аяларах—çёр процентлă вăрăм пуçлă аристократсем—помещиксем, вёсенчен, калăпăр, пёри хăйён аллипе пётём Киев çар округне «тытса тăрать», тепёр—Урала, Пермьрен пуçласа Магнитогорск таран «тытса тăрать» т. ыт. те. Аяларах—нимёçсен шултăра буржуазийё, тата аяларах—пусмăрти халăхсем, шанчăклăрах чурасем, унтан аяларах—шанчăксăртарах чурасем, малалла—сийён-сийён, тёрлё рассăсем, вара чи аялта—çынсем-машинăсем, çынсем-выльăхсем, е, Гитлер калана тăрăх, «этем пулса çитейменнисем», витесенче пурăнакан çынсем, ёрчеме ан пултарччăр тесе фашистсем стерилизаци тăвакан çынсем, çын хисепёнче тăман, ним чёнмесёр ёçлекен масса тăрать». **(Алексей Толстой).**

Çав выçă çăханăн планё—фашистла план. Çав планшăн акă ёнтё икё çул хушши вăрçă хирёсенче юн юхать, государствăсем арканаççё, выçăпа, хурлăхпа нумай-нумай миллионшар çынсем вилсе пётеççё. Акă ёнтё халё фашистсен урнă кётёвёсем Хёрлё Çарăн хурçă хăвачё çине пыра-пыра тăрăнса хăйсен ёнсисене хуçаççё.

...«Тăшмана пёлсе тăмалла», — тет Алексей Толстой. Гитлер кам иккенне пёлмешкён Толстойăн «Кам вăл Гитлер тата вăл мён тăвасшăн?» ятлă пёчёк кёнеки нумаях пулăшма пултарать.

В. ХУДАРСЕМ.